Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

21 (8087) № * Юн кун, 2013 ҫулхи пуш (март) уйӑхӗн 27-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Раҫҫейре

## Медицина пулӑшӑвӗн пахалӑхне ӳстерме

Мартӑн 25 – 26-мӗшӗсенче Шупашкарта Пӗтӗм Раҫҫейри «Сынсем инвалида тухассипе вилессине медицина реабилитаци майӗпе чакарасси» канашлу иртрӗ. Унта Раҫҫейри 80 ытла регион представителӗ хутшӑнчӗ.

Пӗрлехи ларӑва Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев, Раҫҫей Федерацийӗн сывлӑх сыхлавӗн министрӗ Вероника Скворцова, Чӑваш Республикин сывлӑх сыхлавӗн тата социаллӑ аталану министрӗ Алла Самойлова уҫрӗ.

Республика Пуҫлӑхӗ хайӗн сӑмахӗнче сывлӑх сыхлавне ҫӗнетсе улӑштарассипе федераллӑ центр нумай пулӑшнине палӑртрӗ. 2011 – 2012 ҫулсенче республикӑна 4 млрд та 852 млн тенкӗ укҫа-тенкӗ килнӗ. Медицина пулӑшӑвӗпе пахалӑхе хулара та, ялта та палӑрмаллах ӳснӗ.

Вероника Скворцова республикӑри медицина учрежденийӗсенче пулса курчӗ, халӑх сывлӑхне упрас енӗпе ӗҫленине пысӑка хурса хакларӗ.

## Ӳсӗм ҫулӗпе утакан утарҫӑ



*Районта 2012 ҫулта вырӑх-чӗрлӗх отраслӗнче ӗҫлекенсем хушшинче ирттернӗ экономика ӑмӑртӑвӗн кӑтартӑвӗсем паллӑ. Ҫултӑлӑк хушши вылӑх-чӗрлӗх отраслӗнче маларах палӑртнӑ ӳсӗмсемшӗн, ҫӗнӗ тӗллевсемшӗн тӑрӑшса вӑй хунӑ кашни ӗҫченӗн кӗтнӗ самант пулчӗ ку. Ҫак кӗрешӳре кашниех ҫӗнтерме тӑрӑшрӗ, анчах пысӑк чыса чи хастаррисем кӑна тивӗҫрӗҫ.*

*Мичурин яч. хис. агрофирмӑри Василий Яковлев утарҫӑ хӑйӗн патӗнче кашни ҫемье пуҫне 12,5 килограмм пыл туса илсе пӗлтӗрхи ӗҫ кӑтартӑвӗсемпе районти «2012 ҫулхи чи лайӑх утарҫӑ» ят ҫӗнсе илчӗ.*

*Сӑн ӳкерчӗкре утарҫӑсемпе ирттернӗ канашлура республикӑри хурт-хӑмӑр агентствин генеральнӑй директорӗ Геннадий Максимов Василий Ильича тунӑ ӳсӗмпе саламласа вӗлле хуртне аталантарассипе ҫырнӑ хӑйӗн кӗнекине парнеленӗ самант.*

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## Май уйӑхӗччен татса памалла

***Пай ҫӗрӗсене харпӑрлӑха куҫарас ӗҫ вӑраха кайрӗ. Ӑна регистрацилессине тӗрлӗ тапхӑра куҫарчӗҫ. Анчах та кашнин умне пысӑк ыйту мала тухать: харпӑрлӑха куҫармалла е унтан хӑтӑлмалла? Ку тӗлӗшри ларутӑрупа паллаштарма эпӗ район администрацийӗн пурлӑх пайӗн ертӳҫинчен И. ЗАХАРОВРАН ыйтрӑм.***

– Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн хушӑвӗпе килӗшӳллӗн майӑн 1-мӗшӗччен пай ҫӗрӗсен шӑпине татса памалла. Маларах пӗлтернӗ тӑрӑх ку ӗҫе вӗҫлесси июль уйӑхӗччен пулнӑ, лару-тӑрӑва кура вӑхӑта маларах тапхӑра куҫарчӗҫ. Ҫавӑн пекех республика пуҫлӑхӗ пӗр лаптӑк ҫӗр те пушӑ тата усӑсӑр выртмалла маррине ҫирӗплетсех каларӗ. Никамшӑн та вӑрттӑнлӑх мар, ку ыйту чӑннипех те питӗ кӑткӑс.

Тӗп пулусенче халӑха пай ҫӗрӗ пирки тӑтӑшах ӑнлантаратпӑр. Ҫынсен вӑхӑта сая ямасӑр икӗ ҫул-йӗртен пӗрне суйламалла. Пӗрремӗшӗ вӑл – пай ҫӗрӗсен хуҫисен ҫав лаптӑксене хӑйсен харпӑрлӑхне куҫарасси. Тепӗр саманчӗ – енчен те ҫын пай ҫӗрӗ кирлӗ мар тесе шутлать пулсан, унӑн пай ҫӗрӗнчен хӑтӑлмалла, ҫак ӗҫе саккунпа килӗшӳллӗн тумалла.

Ҫапла вара ҫак кунсенчех пай ҫӗрӗсен хуҫисен регистраци палатине кайса хӑйсен заявлени ҫырмалла. Унта вӗсем пай ҫӗрӗ кирлӗ маррине татӑклӑн палӑртаҫҫӗ. Ҫакӑн пек чухне ҫӗр лаптӑкӗ ял тӑрӑхӗн харпӑрлӑхне куҫать. Ку вӑл – ансат мел.

Тепӗр ҫул-йӗр вара кӑткӑсрах. Ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ темиҫе ҫул усӑ курмасӑр выртакан ҫӗр лаптӑкӗсемпе никам та усӑ курманнине ӑнлантарать, ҫирӗплетет. Ҫапла вара вӑл пай ҫӗрӗсене ял тӑрӑхӗ ҫине куҫарма ыйтса район судне иск тӑратать. Пай ҫӗрне регистрацилессине хӑй ҫине илет.

Паянхи кун тӗлне хуҫисем кирлӗ мар тесе шутланакан 8903 пай ҫӗрӗ. Саккунпа килӗшӳллӗн ял тӑрӑхӗсем ҫине пӗр пине яхӑн пай ҫӗрӗ куҫарнӑ. Вӑл шутран 554 пай ҫӗрӗ пирки хуҫисем хӑйсемех кирлӗ мар тесе заявлени ҫырнӑ. Ытти пай ҫӗрӗсем район сучӗн йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн ял тӑрӑхӗсен харпӑрлӑхӗ ҫине куҫнисем. Пӗтӗмпе район судне 1055 иск тӑратнӑ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаҫнӑ.**

Ҫур акине хатӗрленетпӗр

## Пур енлӗ ӗҫлеҫҫӗ

Хальлӗхе хӗл сивви самаях чӗпӗтет пулсан та сарӑ хӗвел кун тӑршшӗне палӑрмаллах вӑрӑмлатрӗ. Ҫавна май ҫур акиччен те вӑхӑт нумаях юлманни сисӗнет. Ҫӗр ӗҫченӗ ҫакна туять тата уй-хир ӗҫӗсене хатӗрленет. Паян ҫак хатӗрленӳ сӗрмелли-ҫунтармалли материалсем, минераллӑ удобрени, ака кондицине тивӗҫлӗ паха вӑрлӑх янтӑлассипе ҫыхӑннӑ.

Оперативлӑ кӑтартусемпе пуш уйӑхӗн 22-мӗшӗ тӗлне районти тӗрлӗ харпӑрлӑх формиллӗ хуҫалӑхсенче 105 тонна (24 процент) дизель топливи, 9,6 тонна (7 процент) бензин пулнӑ. Ҫӗр пичӗ ҫине хӗвел кунсерен ӑшшӑнрах та ӑшшӑнрах пӑхса ытларах та ытларах хӗрӳлӗх валеҫнине шута илсе ҫывхаракан ҫурхи акасуха валли хуҫалӑхсем пӗтӗмпе 315 тонна минераллӑ удобрени турттарса килнӗ. Ильич яч. хис., «Ва-Сем», Чкалов яч. хис., «Оринино», «Восток», «Передовик» хуҫалӑхсем минераллӑ удобренисене ҫителӗклӗ янтӑланӑ.

Пӗтӗм тавралӑх хӗл ыйхинчен вӑраннӑ май хуҫалӑхсенчи юсавҫӑсем паян ял хуҫалӑх техникине ӗҫе янтӑлассипе ӗҫе кӳлӗнеҫҫӗ. Кунпа пӗрлех уй-хир ӗҫченӗсем вӑрлӑх аласа ӑна ака кондицине ҫитересси ҫине малалла тӑрӑшаҫҫӗ. Хатӗрленӗ вӑрлӑхран паянхи куна 65 проценчӗ ҫеҫ (15821 центнер) ака кондицине тивӗҫтерет. 100 процент кондициллӗ вӑрлӑх хатӗрленӗ хуҫалӑхсем: «Герой», Ильич яч. хис., «Передовик» тата «Бездна» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество.

Паянхи куна районӗпе вӑрлӑх аласа тасатассипе 6 звено ӗҫлет.

Районти хуҫалӑхсем ҫур акине хатӗрленсе пӗтӗмпе 143,4 тонна элитӑллӑ вӑрлӑх туяннӑ.

Уй-хир ӗҫӗсене явӑҫтарма хуҫалӑхсенче пурӗ 193 трактор, тиев турттармалли 157 автомашина, 94 культиватор, 89 сеялка, 84 плуг пур. Ял хуҫалӑх машинисем ӗҫе хатӗрри 70 – 80 процента танлашать.

Кӑҫал районти ял хуҫалӑх производство кооперативӗсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсем тӗш-тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене 10,7 пин гектар, ҫӗр улмие 1000 гектар, пахча ҫимӗҫе 63 гектар, пӗр ҫул ӳсекен курӑксене 1566 гектар, кукурӑзӑна 373 гектар акма-лартма планлаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне ҫитес ҫур акире ҫӗр ӗҫченӗсен кӗрхи культурӑсен лаптӑкӗсене 4347 гектар, нумай ҫул ӳсекен курӑксене 6,6 пин гектар ҫинче сӗрелесе нӳрӗк тытса хӑварма тата апатлантарма тивет.

**Хамӑр инф.**

Республикӑра

## Мускавран пулӑшу – чи малтан

Раҫҫей Федерацийӗн Ял хуҫалӑх министерствипе Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ 2013 ҫулта ял хуҫалӑх производствине пулӑшу пама субсиди уйӑрассипе пуш уйӑхӗн 22-мӗшӗнче тунӑ Килӗшӳпе иртнӗ кунсенче республикӑна федераллӑ бюджетран пӗрремӗш укҫа-тенкӗ килсе ҫитнӗ. Унӑн сумми – 556,7 миллион тенкӗ. Вӑл ял хуҫалӑх организацийӗсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсене субсиди тӳлеме кайӗ. Уйӑммӑн илсен:

– инвестици кредичӗсемпе процент тӳленин пӗр пайне саплаштарма – 194,5 миллион тенкӗ;

– пӗчӗк хуҫалӑх формисене аталантарма илнӗ кредитсен процентчӗсене тӳленин пӗр пайне саплаштарма – 200,0 миллион тенкӗ;

– ӑратлӑ вылӑх туянма кайнӑ укҫа-тенкӗн пӗр пайне саплаштарма – 38,3 миллион тенкӗ;

– 1 литр сӗт туса илсе реализацилеме кайнӑ укҫа-тенкӗн пӗр пайне саплаштарма – 37,2 миллион тенкӗ.

ЧР Ял хуҫалӑх министерстви субсидие тивӗҫекенсен реестрне хатӗрлесе ҫитернӗ. Укҫа-тенкӗ ял хуҫалӑх предприятийӗсен счечӗсем ҫине ҫывӑх вӑхӑтрах куҫмалла.

Республикӑри ял хуҫалӑх таварӗсене туса илекенсене паянхи куна республика бюджетӗнчен ҫак енсемпе субсидисем тӳленӗ: ӑратлӑ вылӑх-чӗрлӗхшӗн – 5,7 миллион тенкӗ; кредитсемпе процент ставкисене субсидилеме – 22,5 миллион тенкӗ; агрохимиы ӗҫӗсене пурнӑҫлама кайнӑ тӑкаксен пӗр пайне саплаштарма – 26,6 миллион тенкӗ; мелиораци техники туяннишӗн субсидилеме – 763, 3 пин тенкӗ.

**ЧР Ял хуҫалӑх министерствин пресс-службы.**

## РАЙОНТА: ӗнер, паян, ыран

### Районта ял хуҫалӑх министрӗ пулчӗ

Мартӑн 26-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче пысӑк канашлу иртрӗ. Унӑн ӗҫне республика представителӗсем – Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ, ял хуҫалӑх министрӗ Сергей Павлов, Гражданла оборона тата чрезвычайлӑ ларутӑру енӗпе ӗҫлекен патшалӑх комитечӗн председателӗ Вениамин Петров, ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗ, «Чувашиякурорт» санаторийӗ» уҫӑ акционерлӑ обществӑн генеральнӑй директорӗ Николай Ванеркин – хутшӑнчӗҫ. Ҫавӑн пекех район шайӗнчи депутатсем, предприятисемпе учрежденисен ертӳҫисем, обществӑллӑ организацисен представителӗсем тата ытти активистсем пулчӗҫ.

Канашлӑва район пуҫлӑхӗ, депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗ, Ильич ячӗпе хисепленекен ял хуҫалӑх производство кооперативӗн ертӳҫи Игорь Николаев уҫрӗ тата ертсе пычӗ. Канашлӑвӑн тӗп теми – «Муркаш районӗн иртнӗ ҫулхи экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн итогӗсем тата 2013 ҫулхи тӗллевсем». Асӑннӑ ыйтупа район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ростислав Тимофеев каларӗ. Вӑл кашни отрасле тӗплӗн тишкерчӗ тата хакларӗ, умри тӗллевсене туллин пурнӑҫласан кӑна малашлӑх тухӑҫлӑ пуласси ҫинчен асӑнчӗ.

Канашлу ӗҫне Сергей Павлов пӗтӗмлетрӗ, тӗрлӗ ыйту ҫине хурав пачӗ (тӗплӗнрех хаҫатӑн ҫитес номерӗнче вулама пултаратӑр).

### Сывлӑхпа спорт кунӗ

Юлашки ҫулсенче пур ӳсӗмри ҫынсене те спорта активлӑрах явӑҫтарас тата спорт сооруженийӗсемпе эффективлӑ усӑ курас тӗллевпе чылай мероприяти ирттереҫҫӗ. Кӑҫал, сӑмахран, январӗн 5-мӗшӗнче сывлӑхпа спорт кунне республикипех йӗркелерӗҫ. Ҫак анлӑ мероприятие (унта пурӗ 150 пин ҫын хутшӑннӑ) йӗркелени усси курӑмлӑ пулни пирки унтанпа пӗрре мар сӑмах пуҫарчӗҫ.

Республикӑри Спортпа туризм министерстви сывлӑхпа спорт кунӗн социаллӑ пӗлтерӗшне шута илсе ҫакӑн пек куна кашни муниципалитетра мартӑн 30-мӗшӗнче ирттерме сӗннӗ. Ҫапла вара пирӗн районта ҫак акци ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗ – «Сывлӑх» ФСК-ра иртет. Спорта юратакансем ҫак кун ФСК-на килсе тӗрлӗ услугӑсене тӳлевсӗр майпа тивӗҫме, кунсӑр пуҫне спортзалта арҫынсен волейбол вӑййине сӑнама пултараҫҫӗ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА, Н. НИКОЛАЕВА хатӗрленӗ.**

Ҫырӑнтару – 2013

### Хакӗ ӳсиччен ҫырӑнӑр

**Хаклӑ вулаканӑм! Мартӑн 31-мӗшӗччен «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата кӑҫалхи 2-мӗш ҫур ҫулта илсе тӑма унчченхи хакпа – ултӑ уйӑха 204 тенкӗ – ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Апрелӗн 1-мӗшӗнчен пирӗн хаҫата ҫырӑнмалли хак ӳсет: 216 тенкӗ те 30 пус пулать.**

**Ҫавӑнпа малтанхи хакпа ҫырӑнса юлма тӑрӑшӑр. Ыранхи куна ан хӑварӑр.**

# «Ĕç пулсан пурнăç та тулăх»

***Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Ираида Димитриева хаçат сотрудникĕпе тĕл пулса центр ĕçĕ пирки тĕплĕн каласа панă. Район çыннисене ĕç тупма, çĕнĕ профессисем алла илме пулăшас ыйтусене хускатнă. Чăнах та, ĕçпе тивĕçтерекен центр çынсене йывăр самантра пулăшни савăнтарать.***



**Обществăлла ĕçре вăй хуракансем.**

Чарльз Дарвин çирĕплетнĕ тăрăх упăте ĕçленине кура этеме çаврăннă. Те чăнах та çапла, те урăх сăлтава пула, кăна эпир татса калаймастпăр. Анчах ĕç чăннипех те пурнăç тыткăчи пулнине пурте лайăх пĕлетпĕр.

Икĕ алла сулласа çӳренипе çеç пурнăç тума çук. Шел пулин те, паянхи пурнăçра хăйсен профессийĕпе вăй хумалли вырăн тупайманнисем те пур. Предприяти-организацисенче штата кĕскетнипе ĕççĕр тăрса юлнисем те çук мар. Вĕсен вара мĕн тумалла, йывăрлăхран епле тухмалла? Шăпах çакăн пеккисене алă тăсса парать те районти ĕçпе тивĕçтерекен центр.

Халăха ĕç тупма пулăшассипе вырăнсенчи ĕçпе тивĕçтерекен центрсен пĕлтерĕшĕ пысăкки куç кĕрет. Çакна вĕсенчен пулăшу ыйтакансен шучĕ çулран çул ӳссе пыни те çирĕплетет. 2012 çулта, сăмахран, районти ĕçпе тивĕçтерекен центра 1217 çын пынă. Ĕççĕр çыннăн официаллă статусне вĕсенчен 193-шĕ илнĕ.

Кăçалхи март уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне центрта шута илнĕ ĕççĕррисен йышĕ 41 çынпа танлашнă. Çулталăк каялла çак тапхăрта чылай ытларах – 60 çын – пулнă. Палăртмалла, ĕççĕррисен йышĕнче хĕрарăмсем ытларах, пĕтĕмпе вĕсен тӳпи 63,4 процентпа танлашать. Ĕççĕррисен йышĕнче çуррине яхăн çамрăксем, 30 çула çитменнисем 43,5 процент шутланаççĕ. Нумайăшĕ хăйсен ирĕкĕпе е штатсене чакарнипе ĕçрен кайнисем.

2012 çулта предприятисемпе организацисем, учрежденисем пирĕн центра 1228 ваканси пурри çинчен пĕлтернĕ. Çак кăтарту пĕлтĕрхинчен 1,5 хута яхăн пысăкрах. Апла пулсан предприяти-организацисене ĕç вăйĕ кирлĕ. Ку вĕсен экономики аталаннине тӳрремĕнех кăтартать. Вакансисен тĕп пайĕ – рабочи профессийĕпе çыхăннисем. Паллах, сывлăх тĕлĕшпе çăмăлрах ĕç шыракансем лару-тăрăва кăткăслатаççĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр предприятисен, организацисен кадрсемпе ĕçлекен специалисчĕсене чĕнсе ăнлантару ĕçне туса ирттерчĕ. «Электронный работодатель» программа туяннă. Вăл вакансисем пурри çинчен сведенисене электронлă формăпа пĕлтерме май парать. Çĕнĕ йышши компьютер технологийĕпе усă курса ĕççĕр çынна ĕç параканпа çыхăнса калаçма майсем туса патăмăр.

Кăçал ĕç рынокĕнчи çивĕчлĕх коэффициенчĕ (ĕçпе тивĕçтерекен органсенче шутра тăракан ĕççĕр гражданçен пĕр ваканси пуçне тивекен хисепĕ) пĕчĕкленес туртăм палăрать. Халĕ вăл 0,37 единицăпа танлашрĕ. Çак кăтарту çулталăк каяллахинчен икĕ хут пĕчĕкрех.

Ĕçпе тивĕçтерессинче ырă улшăнусем пуррине кашниех асăрхать-тăр. Çакăнта районти ĕçпе тивĕçтерекен центр тӳпи те курăмлă тенĕ пулăттăм.

2012 çулта центр пулăшнипе 1004 çынна (пулăшу ыйтнисен 90,7 проценчĕ) ĕçе вырнаçтарнă. Çак йыш та 2011 çулхинчен пысăкрах. Вăл çул 984 çынна пулăшма май килнĕччĕ. Пĕлтĕр 997 çынна пулăшу ыйтнă хыççăн вунă кун хушшинче ĕç тупса панă. 26 ентешĕмĕр ĕçпе тивĕçтерекен центр янипе çĕр-шывăн ытти регионĕсенче ĕçе вырнаçнă.

Ĕç рынокĕнчи çивĕчлĕхе чакарассинче тӳлевлĕ обществăлла ĕççен пĕлтерĕшĕ пысăк. Çакăн йышши ĕççене 2012 çулта ĕççĕр 98 çынна явăçтартăмăр. Обществăлла ĕççене хутшăннисен тĕп йышĕ хĕрарăмсем пулса тăраççĕ. 16–29 çулсенчи çамрăксем те кунашкал ĕççенчен ютшăнмаççĕ, 18 яшпа хĕр обществăлла ĕçре вăй хунă.

Йывăр лару-тăрури çынсене пулăшас тĕллевпе районти предприятисемпе, организацисемпе тачă çыхăну тытатпăр. Кăçал вĕсемпе ĕççĕр гражданçене вăхăтлăха йышăнма 5 килĕшӳ тунă. Çаксем ĕççĕр 6 çынна вăхăтлăх ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтерчĕç. Çак майпах 3 инвалида, нумай ачаллă тата пĕччен ашшĕ-амăшĕ шутланакан 3 çынна ĕçпе тивĕçтерме пултартăмăр.

Çавăн пекех училищĕсемпе техникумсенчен вĕренсе тухнă 18–20 çулхи яшсемпе хĕрсене вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупса памалли ятарлă программа пур. Унпа килĕшӳллĕн кăçал 3 çамрăка пулăшрăмăр. Вĕреннĕ вăхăтра туптанă пĕлĕве ĕçре çирĕплетме май туса патăмăр.

Ĕççĕр пĕр гражданина предпринимательлĕх ĕç-хĕлне регистрацилемелли документсем хатĕрлеме укçа-тенкĕпе пулăшма пултартăмăр. Çавăн пекех ĕççĕр 5 çынна хăйсем тĕллĕн ĕçлессине йĕркелемешкĕн укçа-тенкĕ уйăрса пулăшрăмăр. Çак субсиди 58,8 пин тенкĕпе танлашать. Темĕнле пысăк тӳлев теейĕмĕн, анчах çĕнĕ ĕç пуçарас тĕлĕшпе – лайăх тĕрев. Çынсем пулăшушăн пысăк кăмăлпа тав тăваççĕ.

2012 çулта ĕççĕр 39 гражданина кирлĕ професси алла илме вĕренме ятăмăр. Çав шутра тракторист, хуралçă, котельнăй операторĕ, суту-илӳ залĕн кассирĕ, водитель, ЭВМ операторĕ. Çак специальноçсене илнĕ çынсемшĕн ĕç тупасси чăрмавлă мар.

Ачисем виçĕ çул тултариччен вĕсене пăхмалли отпускра пулнă хĕрарăмсемшĕн тепĕр хут ĕçе кӳлĕнесси пĕртте çăмăл мар. Нумайăшĕ ĕç тупаймасăр хăшкăлать. Çавна май асăннă йышри 12 хĕрарăма кассира, ЭВМ операторне вĕренме ятăмăр. Кирлĕ специальноç илни вĕсене ĕç рынокĕнче хăйсен вырăнне тупма пулăшать.

Шкулта вĕренекенсем те центр хӳтлĕхĕнче. Каникулсем вăхăтĕнче, уроксем хыççăн 14–18 çулсенчисем алăра тыткаламалăх укçа тăваççĕ. 2012 çулта çул çитмен 670 хĕрпе каччă вăй хучĕç.

Патшалăхăн професси ориентацийĕпе çыхăннă пулăшу ĕçĕсемпе 747 çынна тивĕçтернĕ. Ĕççĕр нумай гражданина социаллă адаптаципе çыхăннă пулăшу ĕçĕсене кӳнĕ. Психологи енĕпе тĕрев панă. Çакă та вĕсене ĕçе вырнаçас тĕлĕшпе конкурентлă кĕрешӳре хăйсене шанчăклăрах туйма пулăшасси куç кĕрет.

Çул çитмен гражданçене професси суйласа илме пулăшасси те пирĕншĕн пĕлтерĕшлĕ. Вĕсене тĕрлĕ професси çинчен тĕплĕн каласа паратпăр. Ку е вăл професси алла илмелли майсемпе паллаштаратпăр. Профессие ăнланса суйласа илме пулăшатпăр. Ку енĕпе тĕрлĕрен мероприятисем ирттертĕмĕр. «Твой выбор профессии» уйăхлăх йĕркелерĕмĕр. Пĕтĕм тĕнчери Ачасен кунĕ тĕлне çул çитмен гражданçем валли «Сегодня мечта, завтра профессия» акци ирттертĕмĕр. Професси тупма пулăшакан волонтерсен акцийĕ те пулчĕ. Шкулсенчен вĕренсе тухакансем валли «Моя будущая профессия» темăпа ĕçпе тивĕçтерекен служба кунне йĕркелерĕмĕр.

Çул çитмен гражданçем валли професси суйласа илме пулăшас тĕллевпе ирттерекен мероприятисене райадминистрацин вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕпе пĕрле ирттертĕмĕр. Вĕсене пире ăнланнăшăн тав сăмахĕ калас килет.

2012 çулта ĕç вакансийĕсен 5 ярмăрккине йĕркелерĕмĕр. Вĕсене 129 çын хутшăнчĕ. Çав ярмăрккăсем вăхăтĕнче ĕç паракансем 206 ваканси пурри çинчен пĕлтернĕ. Ĕç шыракан 188 çынна вăхăтлăх ĕç вырăнĕпе тивĕçтернĕ.

Паянхи саманара ĕçлĕ пулас ыйту пур çынна та пырса тивет: тĕрлĕ социаллă ушкăнрине те, тĕрлĕ професси илнине те, тĕрлĕ ӳсĕмрине те. Апла пулин те уйрăмах пысăк йывăрлăха çамрăксем лекеççĕ – ятарлă вăтам пĕлӳ паракан профессилле вĕренӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнисем. Вĕсен вăй хурас кăмăлĕ те пысăк ĕнтĕ.

Ĕçпе тивĕçтерес политика ĕç рынокĕнче пулса иртекен процессене контрольлеме май парать. Активлă тата пассивлă майсемпе тăватпăр çакна.

Активлă мерăсен шутне вакансисен ярмăрккине кĕртетпĕр. Вăл ĕç паракансемпе уйрăмах эффективлă ĕçлеме май парать. Çавăн пекех ĕçпе тивĕçтерекен центрăн услугисене сарма пулăшать.

Вакансисен ярмăрккине ирттерни çаксем енĕпе пулăшать:

-ĕç паракансене хăйсен вакансийĕсене кăтартма явăçтарма, ĕç пур гражданçене те хăйсене килĕшекен ĕç шырама тата тупма,

-ĕç шыракан гражданçене ĕç паракансемпе çыхăнлантарма,

-ĕç шыракан гражданçене ĕçе направлени илме, кирлĕ профессие суйлама, ĕçпе тивĕçтерекен центр специалисчĕн консультацине илме,

-гражданçене ĕç шырамалли тапхăра кĕскетме.

Пирĕн опыт кăтартнă тăрăх минивакансисен ятарлă ярмăрккисем уйрăмах результативлă иртеççĕ. Вĕсене эпир конкретлă ĕç паракан е темиçе предприятипе организаци валли ирттеретпĕр. Е гражданçен уйрăм категорийĕ валли йĕркелетпĕр. Сăмахран, çул çитмен гражданçем, çамрăксем, инвалидсем валли тата ытти те.

Районăн ĕçпе тивĕçтерекен службин хăйĕн тивĕçне – Муркаш тăрăхĕнче пурăнакансене ĕçпе тивĕçтерессине – малашне те çине тăрса пурнăçлĕ. Ĕç пулсан пурнăç та тулăх пулать. Çакна тĕпе хурса тăрăшатпăр.

## Саламлатпăр



Хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, кукаçие – Муркашра пурăнакан **Николай Валентинович ЛЮБИМОВА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу, çемьере килĕшӳ, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей. Пурăн эсĕ çĕр çул савăнса, пурнăç телейне туйса, мăшăрупа ачу-пăчуна, мăнуксене савса. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Коллектив МУП ЖКХ «Моргаушское» сердечно поздравляет генерального директора ООО «Управляющая компания ЖКХ» **ЛЮБИМОВА Николая Валентиновича** с юбилеем. Желаем успехов в работе, крепкого здоровья, оптимизма, семейного счастья.

Коллектив МУП ЖКХ «Моргаушское» сердечно поздравляет плотника **БЕЛКОВА Анатолия Вениаминовича** с юбилеем.

Не может жизнь назад вернуться,
Года идут, бегут, летят.
И не успеешь оглянуться
Как прожито уж – 60.
Примите наши поздравленья
И самый добрый наш привет,
Здоровья, радости и счастья,
И жить желаем много лет.



Хаклăран та хаклă юратнă çыннăмăра – Вăрманкас Хачăк ялĕнче пурăнакан **Владислав Николаевич СМИРНОВА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ пирĕнпе юнашар пулнишĕн эпир савăнатпăр, тав сăмахĕ калатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Санпа яланах юратупа шанчăк, телейпе ăнăçу çӳреччĕр. Умра яланах çутă та ырă кунсем пулччăр. Ĕмĕрӳ вăрăм пултăр. Пуриншĕн те тав сана.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем, хăтипе тăхлачисем.**

Шаптак Муркашра пурăнакан **Олег Алексеевич НИКОЛАЕВ** мартăн 25-мĕшĕнче 50 çулхи юбилейне паллă турĕ. Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра çак паллă кунпа ăшшăн саламлатпăр.

Утас çулу санăн вăрăм та такăр пултăр, Турри вăй-хал парса тăтăр, чирчĕртен упратăр. Малашне те çемьере, тăвансемпе савăнса та килĕштерсе пурăнма юман пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн телей, савăнăç. Эпир сана юрататпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, ашшĕпе амăшĕ тата чи çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – **Светлана Георгиевна НИКИФОРОВĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çак çуркуннехи хĕвел çутти пек яланах çутатса тăрсам пирĕн çине. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Хамăр ачасен ачисене пăхса савăнса мăнаçлăн çӳремелле пултăр. Çакă çăмăл мар ĕçре Турă вăй-хăват, чăтăмлăх патăр. Эсĕ пирĕншĕн питĕ пысăк телей, савăнăç. Эпир сана юбилей ячĕпе тепĕр хут чунтан юратса саламлатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ашшĕпе амăшĕ, хуньамăшĕ тата çывăх тăванĕсем.**

## Районта

# Православи кĕнекисен кунĕ

Пуш уйăхĕн 14 – 22-мĕшĕсенче районти библиотекăсенче православи кĕнекисен кунĕсем иртрĕç. Вĕсен тĕллевĕ – çынсене православи тĕнĕпе çывăхлатасси, вулакансене православи литературипе туслаштарасси.

Халĕ каланă кунсем Мăн Сĕнтĕр библиотекинче – «Чун кĕнекисем – чи пĕлтерĕшли пирки», Муркашри тĕп библиотекăра – «Ĕмĕрхи ăслăлăх вăрттăнлăхĕ», Очăкассинче «Çыннăн чун культури православи урлă» ятсемпе иртрĕç.

Библиотека пулăшăвĕпе усă куракансем çак кунсенче православи кĕнеки ăслăлăхăн виçесĕр çăл куçĕ пулнине тепĕр хут ĕненчĕç. **А. ПЕТРОВ**.

# Вěлле хурчě ыйхăран вăранать

Паян районти кашни харпăрлăх формиллě предприятирех иртнě çулхи ěçсене пěтěмлетсе умри тěллевсене палăртаççě. Кунпа пěрлех ěçрен катара тăманнисем пурнăçламалли ěçсене те пěрле пулса кая хăвармасăр сӳтсе яваççě. Халě калани выльăх-чěрлěх патěнче ěçлекенсемшěн те пěлтерěшлě. Обществăлла выльăх-чěрлěх ěрчетессин пěр енě вăл – хурт-хăмăр отраслне аталантарасси. Вěлле хурчě ял хуçалăх аталанăвěпе тачă çыхăнура тăни пуриншěн те паллă. Ку кăна та мар, халăх сывлăхне сыхлас тата упрас тěллевпе те ылтăн хуртăн пěлтерěшне сивлекен çуках тетěп. Çав вăхăтрах вěлле хурчě хăй тěлěшпе çут çанталăкăн кирек-хăш тапхăрěнче те пысăк тимлěх ыйтать. Çакна тěпе хурса республикăри хурт-хăмăр агентствине район администрацийěн экономикăпа АПК аталанăвěн пайě иртнě тунти кун, пуш уйăхěн 19-мěшěнче, тěрлě харпăрлăх формине ěçлекен утарçăсемпе тěл пулу иртттерчěç.

Урамра асар-писер çил-тăман вěçтерет пулин те, вăхăт хăйěннех тăвать: çут çанталăк майěпен хěл ыйхинчен вăранать. Çак тапхăр утарсенче сисěнмеллипех сисěнет ěнтě. Мал ěмěтлě утарçăсем хěл ыйхинчен вăйсăрланса тухакан пыл хурчěсем тěлěшпе çанă тавăрсах ěçлеме пуçларěç. Вěлле хурчěсем валли витаминлă сывату хутăшě хатěрлесси – паян нумай утарçăшăн кун йěркинче тăракан ыйту.

**МАЛТАНХИ ПУЛĂШУ**

Хумхантаракан ыйтăва çăмăлллăнах татса пама пулать. Çакна тума хěл ыйхинчен вăранакан çут çанталăк хăех пулăшать.

Пуш тата ака уйăхěсенче хыр лăссисемпе кăчкисенчен хатěрленě шывăн усси пысăк. Çакна валли турат вěçěнчи хыр лăссисен вěçěсене 40 миллиметр чухлě тата хыр кăчкисене илсе сывлăш лайăх вылякан тěттěм те типě вырăнта типěтмелле. Типсен вěсене вěтетмелле те вěри шыва ярса лартмалла. Пěр килограмм чěр тавар пуçне 4 литр вěри шыв кирлě. Вěри шыв янă хыççăн савăта хупламалла та шыв сивěниччен тытмалла, хыççăн сăрхăтармалла. Эмел хатěр.

200 грамм кěрекен стакан хатěр шыва 3 литр сахăр сиропě çине усă кураççě.

Ку эмелпе утарсенче çуркунне тата кěркунне усă курни вырăнлă. Янтăланă апат пыл хурчěсен пěтěмěшле аталанăвěшěн питě усăллă, вăл аман çăмарта тăваслăхне ӳстерет, чирлессине чакарать.

Хатěрленě сиплě шывпа 2 талăк усă курмалла.

**ЙЫШ ПЫСĂК**

Çěр ěçне, выльăх-чěрлěх отраслне чунěпе парăннă çынсем Муркаш тăрăхěнче те фермерсен çулěпе активлă утнине асăрхатăп та вěсен кашни ӳсěмěшěн савăнатăп. Кунта манăн паян хурт-хăмăр отраслне аталантаракансем пирки сăмах пуçарас килет.

Районти ялсенче хурт-хăмăр йышě тата утар хисепě чакманни пирěн енре ку отрасль аталану çулěнчен юлманнине çирěплетет. Çакăнта район ертӳçисен тӳпи те пур, хуçалăха ертсе пыракансен тата специалистсен ěçěпе уйрăм утарçăсен тăрăшулăхě те курăнать, республикăри хурт-хăмăр агентстви утарçăсем хушшинчи ěçе пěлсе йěркелесе пырса пулăшни мала тухать. Хурт-хăмăр йышěпе пирěн район (пур йышши категоринчи утарçăсен ěçне те пěрлештерсен) – республикăра малтисен ретěнче. Çакă пирěн ума çěнě тěллевсем лартать, аталану çулěсем уçать.

Асăннă кунхи канашлăва район администрацийěн вěрентӳ тата çамрăксен политикин пайěн методика кабинетěнче Муркаш енри 40 ытла утарçă пуçтарăнчě. Канашлура хěл кунěсем иртнě май вěлле хурчěсене çăва кăларассипе пурнăçламалли ěçсем тěлěшпе вěрентӳллě калаçу пулчě. Пухăннисем çак кун çавăн пекех ěçтешěсен ěçри çěнěлěхěсемпе, наукăн паян ыйтакан уйрăмлăхěсемпе паллашрěç.

Паянхи куна районти ял хуçалăх предприятийěсенче пурě 4 утар ěçлет. Вěсенче пыл хурчěсен 240 ытла çемйи çăва тухма хатěрленет. Хурт-хăмăр ěрчетессипе район территорийěнче çавăн пекех ултă хресчен (фермер) хуçалăхě ěçлесе пырать. Вěсен харпăрлăхěнче татах 130 çемье ытла хурт-хăмăр пур. Уйрăм утарçăсем пирки калас пулсан «Герой» ял хуçалăх производство кооперативěнче ěç династине тăсакан Владимир Михайлова тата Мичурин яч. хис. агрофирмăри Василий Яковлева, хăйěн хресчен (фермер) хуçалăхне аталантаракан Владимир Хлебникова тěслěх вырăнне илсе кăтартмалла. Халě каланисемсěр пуçне килти хушма хуçалăхсенче те вěлле хурчě тытакансен хисепě çулсерен ӳсет. Паян 300 яхăн килти хушма хуçалăхра пыл туса илессипе ăнăçлă ěçлесе пыраççě.

Килти хушма хуçалăхсене илсен кунта династи тăсăмě – тěп вырăнта. Катькас ял тăрăхěнчи В. Кондратьев, Турай ял тăрăхěнчи Л. Кузеев, Москакасси ял тăрăхěнчи А. Лобастовăпа Е. Овчинникова, Хорнуй ял тăрăхěнчи И. Михайлова хăйсен тăрăшуллă ěçěсемпе аслă ăрурисен тăрăшулăхне малалла тăсаççě, çамрăксене çак ěçе хăнăхтараççě.

Пěрлехи ěç-хěлпе районти пěрлешӳллě хуçалăхсенчи утарçăсем иртнě çул пěтěмпе 1244 килограмм пыл туса илнě. Таварлăх пыл вара 824 килогрампа танлашнă. Мичурин яч. хис. агрофирмăри В. Яковлев утарçă хăйěн патěнчи кашни çемье пуçне 12,5 килограмм пыл туса илсе пěлтěрхи ěç кăтартăвěсемпе районти «2012 çулхи чи лайăх утарçă» ята тивěçрě.

**КАНАШЛУ**

Хурт-хăмăр ěçчен те сăпайлă çынна юратать. Унăн аллинче утар ěçě ăнать, хурт хунать, çултан-çул ытларах продукци пулать. Районти вěлле хурчě ěрчетекенсем – шăпах çак карта ларакан ěçченсем. Вěсем хăйсен ěçчен тусěсемпе пěр чěлхе тупнă темелле ěнтě. Çавăнпах ěçри ӳсěмěсем те çуллен сумлă.

Ял хуçалăхěнче кашни ěçěн вăхăчě тата хăйне евěрлěхě пур. Пěрлештерсе пăхсан вěсем пурте çěршыв тěреклěхěшěн, апат-çимěç рынокěн тулăхлăхěшěн. Çак тытăмра хурт-хăмăр отраслě уйрăм вырăн йышăнать. Вěлле хурчěпе çут çанталăка юратакан çеç ěçлеме пултарни – ку отраслěн уйрăмлăхě. Шывшур тухса кайиччен йěркеленě канашлăва утарçăсем йышлă пухăнни те, çак тěл пулăва ЧР хурт-хăмăр агентствин генеральнăй директорě Г. Максимов тата районти экономикăпа АПК аталанăвěн пайěн ертӳçи Н. Костина хутшăнни те районта ку отрасль çине юлашки çулсенче ытларах тимлěх уйăрма пуçлани пирки калаççě.

Çакна палăртса хăвармалла: кăçал утарçăсен çурхи канашлăвě ěçлě ларутăрура, анлă калаçура иртрě. Çакă утарçăсен умěнче татса паман тата паян та хумхантаракан ыйтусем нумай пулнине çирěплетрě.

Тěл пулăва хутшăннисенчен ытларахăшě килти хушма хуçалăхра вěлле хурчě тытассипе пуян опыт пухнă утарçăсем пулнăран канашлури калаçу усăллă иртнине унта хутшăннисем никам та пытармарěç.

– Килти хушма хуçалăхра пыл хурчě тытасси – отвěтлă ěç. Турă кайăкěсемпе пěр чěлхе тупма пултарни вара укça-тенкěпе пěрлех сывлăх та парать. Хамăн килти хушма хуçалăхра эпир нумай çул вěлле хурчě ěрчететпěр. Хамăн пурнăçăма эпě вěсемпе ěçлемесěр курмастăп та. Паянхи пек канашлусем ирттерни районти утарçăсене пěр чăмăра пухать, ыттисен ěçě-хěлěпе тата çěнěлěхсемпе паллашса малашлăх утăмсене палăртма май парать, – терě канашлу хыççăн Муркашран килнě утарçă Вера Пикузова.

Г. Максимов утарçăсене кун йěркинче пур çěнěлěхсемпе нумай паллаштарчě. Апла пулин те Геннадий Антоновичăн калаçăвěнче пыл хурчěсене технологие пăхăнса çăва кăларасси тěп вырăнта пулчě. Ку ыйтăва сӳтсе явнă çěрте утарçăсем те хăйсен сěнěвěсемпе, вуншар çул вăй хурса пухнă ěç опычěпе паллаштарчěç. Туслă калаçура ăша илмелли, вěренсе юлмалли, çěннине епле пурнăçа кěртмелли енсем нумай пулчěç.

Республикăри хурт-хăмăр агентствин районти суту-илӳпе хатěрлев пункчěн хатěрлевçи В. Гониашвили утарçăсем активлă пулнине, чěннě хăнасем хăйсен калаçăвěнче çěнěлěхсене пурнăçа кěртессипе пурнăçламалли ěçсем пирки каланине малашнехи ěçсен никěсě тесе йышăнчě.

Канашлуран çакă та паллă пулчě. Иртнě кěркунне хурт-хăмăра хěл каçма лайăх хатěрленěрен кăçал вěлле хурчěсене сивě вăхăта тӳсěмлě чăтса ирттернě. Анчах сивě хěл кунěсем вěсен патěнчи апата сахаллатнă. Çавăнпа та паян утарçăсен тěллевě – вěллесене тата çемьесене тěрěслесе тухасси, çитмен апата кая юлмасăр хурса парасси. Çаксем çинчен пухăннисене нумай тěслěхпе çирěплетсе хурт-хăмăр агентствин генеральнăй директорě Г. Максимов калаçа пачě.

Вěлле хурчěсен чирěсемпе кěрешес ыйтусемпе пухăннисене выльăх чирěсемпе кěрешекен районти станци пуçлăхěн çумě Л. Бояринова паллаштарчě, кашни сывату мелě çинче уйрăммăн чарăнса тăчě.

Кăçалхи канашлура тепěр ырă çěнěлěх те кун çути курчě. Пухăннă утарçăсем хăйсен ěçне-хěлне йěркелесе пыма хăйсем хушшинче староста суйларěç. Çак тивěçе Шаптак Муркашра пурăнакан, юлашки çулсенче хурт-хăмăр ěçчетессипе çанă тавăрса ěçлекен Геннадий Толстов çине хучěç.

– Хурт-хăмăр отраслěнче çěнě технологисене çул парасси утаçăсем пěрле пухăнса умри ыйтусене сӳтсе явнинчен пуçланать. Хамăн шухăшсене эпě пытармастăп. Хамран пулăшу ыйтакана эпě вăй çитнě чухлě пулăшма хатěр, – терě Геннадий Тихонович хăйěн патне калаçăва пыма чěнсе.

**А. БЕЛОВ.**

**Пуш уйăхěн 27-мěшě – Пěтěм тěнчери театр кунě**

# Кун-çулě вěçсěр-хěрсěр пултăр

Манăн сăмахăм Чăваш патшалăх академи драма театрě пирки. Кăрлачăн 27-мěшěнче вăл хăйěн 95 çулхи юбилейне паллă турě. Шăпах çак кун чăваш çамрăкěсем хăйсен пěрремěш спектаклне лартнă. Иртнě ěмěрěн 16 – 17-мěш çулěсенче Хусанта, педагогика институтěнче, художество шкулěнче тěрлě училищěпе гимназире чăваш çамрăкěсем йышлăн вěренме пуçланă. Вěсем малтан пěчěкшерěн, каярахпа пурте пěрле пуçтарăнса кану каçěсем ирттерме тытăннă. Пěррехинче юрă ăстисем кěвě-çемě шăрантарнă, пěлменнисен вара вěренмелле пулнă. Çапла йěркеленнě чăваш çамрăкěсен хорě вěренӳ заведенийěсенче тěрлě мероприяти умěн концертсем лартма пуçланă.

1906 çулта Хусанта тутар халăхěн театрě йěркеленнине пěлсен, чăвашсем те çак ěçе вăя кěртме йышăннă. Хусанти художество шкулěнче вěренекен И. Максимов-Кошкинский çамрăк ку енпе питě тимленě, хăй çине театр ертӳçипе режиссерěн ěçěсене илнě. Ун чухне чăваш спектаклěсем пулман-ха. Çавăнпа та Н. Островский çырнă «Не так живи, как хочется» пьесине чăвашла куçарнă.

Театр историйě питě пуян. Çак тапхăрта артистсем тěрлě ырă ят çěнсе илчěç, тěнче шайне тухрěç.

Пěр самант пирки сире каласа парам-ха. 4 – 5 çул каялла Чăваш патшалăх академи драма театрě Шупашкарта канмалли кунсенче те спектакль кăтартатчě. Çапла вара мăшăрпа иксěмěр театра çул тытрăмăр. Ун чухне вара шăпах пуш уйăхěн 27-мěшěччě. Спектакль хыççăн артистсене саламлас тěллевпе сăвă шăрçаларăм. Вăхăт çитсен вара сцена çине тухрăм, анчах та салам сăмахěсем пуçран тарса çухалчěç. Çапла вара сăввăн юлашки йěркисем кăна аса килчěç.

Паянхи кун эпě Шупашкарта Чăваш Республикин 6 театрě пуррине пěлетěп, вěсем ăнăçлă ěçлеççě, аталанаççě. Апла пулсан Хусанта йěркеленнě пěрремěш театр шанчăклă вăрă акнă. Ялсенче те халăх театрěсем пурри – пархатарлă ěç. Театрăн культурăна аталантарас тӳпи малалла та шанчăклă алăра пултăр.

**Н. ПЕТРОВ.**

Нискасси ялě.

**Спорт**

# Ăмăртусене хутшăнăр

Районти шкул ачисен спартакиади шучěпе апрелěн 2–3-мěшěсенче шкулта вěренекенсен командисем Муркашри «Сывлăх» ФСК-ра волейбол вăййисенче вăй виçěç. Малтанхи кун – хěр ачасен командисем, иккěмěш кун – арçын ачасен командисем вылясси паллă. Ăмăртусем 9 сехет çурăра пуçланаççě.

* * *

Ěç коллективěсен спартакиади шучěпе мартăн 30-мěшěнче шашкăлла выляссипе ăмăрту иртет. Унта районти ял хуçалăх предприятийěсен, организацисемпе учреждениссен тата ял тăрăхěсен командисене чěнеççě. Командăра 3 арçынпа 1 хěрарăм пулмалла. Ăмăрту район администрацийěн методика пӳлěмěнче 10 сехетре пуçланать.

* * *

Мартăн 30-мěшěнче районта чемпион пулассишěн арçынсен командисем волейбол вăййинче ăмăртаççě. Ăмăрту «Сывлăх» ФСК-ра иртет. 9 сехет çурăра шăпа туртаççě.

# Ишме пěлекенěн çăлма та пěлмелле

